ЯЛАВ
ФЕВРАЛЬ. 2. 1982

*В. И. Чапаев ячĕ граждан вăрçин историйĕнче çап-çута çăлтăр евĕр йăлтăртатса тăрĕ.*

Дм. ФУРМАНОВ.



# ÇУТĂ ĔМĔТ-ХАВАЛПА

Кăçалхи февраль уйăхĕнче чăвашсен хальхи вăхăтри паллă литература тĕпчевçи тата критикĕ, филологи наукисен докторĕ Евстафий Владимирович Владимиров профессор 60 çул тултарчĕ.

Çак аслă çул йăмраллă пĕчĕк чăваш ялĕнчен пуçланнă. Евстафий Октябрьти революци кĕрлевĕпе вăранна Актай ялĕнче 1922 çулхи нарăсăн 17-мĕшĕнче вăтам хресчен килйышĕнче çуралнă. Халь çак ял Муркаш районне кĕрет, унччен Етĕрне уесне кĕнĕ пулнă. Тăван ялĕнчи пуçламаш шкул хыççăн Йуçкассинчи вăтам шкула çÿренĕ Евстафий. Унтан вĕренсе тухсан, 1939 çулта пулас ученăй Чăваш патшалăх педагогика институчĕн чĕлхепе литература факультетне вĕренме кĕрет. Анчах та çулталăкранах, укçа-тенкĕ енĕпе йывăр пулнăран, вĕренĕве пăрахма тивет. Вара вăл «Çамрăк большевик» хаçатра пĕр вăхăт ĕçлет. Ку ĕçре çамрăк журналист пурнăçа тарăнрах сăнама, тишкерӳллĕ куçпа пăхма хăнăхать.

1941 çулта Евстафий Владимирович çар тумĕ тăхăнать. Çар службинче вăл 1946 çулччен тăрать. Унтан таврăнсан, Чăваш патшалăх педагогика институтне çĕнĕрен вĕренме кĕрет. Диплом илнĕ хыççăн 1949—1950 çулсенче Муркашри вăтам шкулта вырăс чĕлхипе литератури вĕрентет. Педагогăн пархатарлă тивĕçне тарăн туйса илни çамрăка малалла вĕренес ĕмĕтпе хавхалантарать. Çав ĕмĕт туртнипе вăл 1950 çулта РСФСР Педагогика Наукисен Академийĕн наци шкулĕсен тĕпчев институчĕ çумĕнчи аспирантурăна вĕренме кĕрет. Ăна ăнăçла вĕçленĕ хыççăн, 1953 çулхи декабрь уйăхĕнче, кандидат диссертацине хӳтĕлет. Вĕрену методики ытларах интереслентернĕ ана, çавăнпа «Чăваш шкулĕнче Н. А. Некрасов пултарулăхне вĕрентесси» темăна суйласа илнĕ диссертант.

Вăтăр çула яхăн ĕçлет ĕнтĕ Евстафий Владимирович И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче. Преподаватель, доцент, унтан вырăспа ют çĕршыв литературисен кафедрин пуçлăхĕ. Паян кун та ертсе пырать вăл çак кафедрăна, пĕтĕм пĕлĕвĕпе ăсталăхне юратнă ĕçе парать.

Педагогика ĕçĕпе пĕрлех Евстафий Владимирович наука тĕпчевĕ валли те вăхăт ситерет. Нумай çул хушши вăл чăвашпа ытти халăх литературисен тĕрлĕ енлĕ çыхăнăвĕсене тишкерет. Çак темăпа çырнă сулăмлă ĕçсен шутĕнче: «Русские писатели в Чувашии» (1959), «Великий Октябрь и межнациональные связи чувашской литературы» (1968), «Межнациональные связи чувашской литературы» (1970), «Некрасов и чувашская поэзия» (1972) т. ыт. те. Кунсăр пуçне тĕпчевçĕ Чехов, Лермонтов, Пушкин, Тукай, Тургенев пултарулăхĕсене тĕпчесе темиçе теçетке статья çырнă.

Тĕпченĕçемĕн тематика анланса, тĕп концепци тарăнланса пырать. Нумай вăхăт хушши тĕпченĕ ыйтусене пĕр тĕвве çыхса, Евстафий Владимирович 1972 çулта филологи наукисен докторĕн диссертацине хатĕрлесе çитерчĕ тата ăна ăнăçлă хӳтĕлерĕ. Диссертант хăйĕн ĕçĕнче чăваш литературин пултарулăх меслечĕ аталаннин тĕрлĕ тапхăрĕсене сăнаса, вĕсене тĕплĕн çутатса панă. Литература историйĕнче хальччен çирĕпленнĕ шухăшсенчен чылайăшне çĕнĕ куçпа пăхса хак парать вăл. Пĕтĕмлетсе каланă шухăшĕсем унăн сулăмлă, ĕнентеруллĕ. Диссертацин тĕп пайĕ 1979 çулта Чăваш кĕнеке издательствинче « В русле времени» кĕнекере пичетленсе тухрĕ.

Паянхи литература тĕпчевĕнче Владимиров профессорăн сасси уçăмлăн илтĕнсе тăрать. Кулленхи тишкеру ĕçне хутшăнма вăхăт сахалтарах пулин те, вăл литературăна академилле тĕпчес ĕçĕн малти ретĕнче. Ун ĕçĕсем теорипе методологи тĕлĕшĕнчен çирĕп никĕслĕ, яланах çĕнĕ шухăшсемлĕ. Çавна пула провинциализм чирĕн паллисем çук вĕсенче.

Коммунист-педагог, пултаруллă тĕпчевçĕ хăйĕн ĕçне чун-чĕререн парăннă. Кафедрăна ертсе пынипе пĕрлех студентсем умĕнче лекцисем вуламалла. Лекцисене, пурнăçран юлас мар тесен, паянхи наукăн çĕнĕ сăмахĕпе пуянлатсах тăмалла. Общество ĕçĕ мĕн чухлĕ вăхăт, тимлĕх ыйтать тата. Владимиров профессор чылайранпа хăй ĕçлекен институтри ученăй Совет членĕ, Мордва патшалăх университечĕ çумĕнчи кандидат диссертацийĕсем хӳтĕлетерекен Специализированнăй Советăн членĕ, Чăваш писателĕсен Союзĕн правлени членĕ тата литературоведенипе критика совечĕн председателĕ, Совет Союзĕпе Венгри хушшинчи туслăх обществин Шупашкарти уйрăмĕн ответлă секретарĕ.

Çапла, пур ĕçсене шута илсе, хисеплесе тухма та çăмăл мар. Анчах та пурне те ĕлкĕрмелле Евстафий Владимировичăн, мĕншĕн тесен вăхăт çапла тума ыйтать. Кама нумай панă, çавăнтан ытларах ыйтаççĕ-çке-ха.

Педагогикăпа наукăри пысăк çитĕнусемшĕн Евстафий Владимирович РСФСР Çутĕç министерствин Хисеп грамотине тивĕçлĕ пулнă. 1967 çултанпа вăл халăха çутта кăларас ĕç отличникĕ. 1970 çулта, В. И. Ленин çуралнăранпа 100 çул тултарнине паллă тунă кунсенче «За доблестный труд» медальпе наградăланă ăна. Пĕлтĕр вăл халăхсен Туслăхĕн орденне илчĕ. Владимиров профессор 1974 çултанпа—Чăваш АССР аслă шкулĕн тава тивĕçлĕ работникĕ.

Сăпай та ĕçчен этем, Евстафий Владимирович тăван культурăна çĕклес, ăна малалла аталантарас ĕмĕт-хавалпа хĕмленсе пурăнать. Мĕн кĕçĕнрен кулĕннĕ йывăр лава шав малалла туртать вăл.

Малашне те çак пархатарлă ĕçĕн малти ретĕнче пыма иксĕлми вăй-хал, ăнăçу сунатпăр Сире, хаклă Евстафий Владимирович.

**Юрий АРТЕМЬЕВ**

---

Алексей АФАНАСЬЕВ

# ПОЭТĂМĂР, ЭС ПИРĔНПЕ ЯЛАН

*Аппа тĕрленĕ шура кĕпепе*
*Эп кайрам Атăлпа Шупашкара.*
*Вунпиллĕкреччĕ. Кĕркунне. Йĕпе.*
*Çитес çулне —*
*çĕршывам варçара...*

*Чĕнеççĕ Иванов юбилейне —*
*Поэтамăр тултарнă алла çул.*
*Çур ĕмĕрте чăвашан «Нарспине»*
*Мĕнпур Çĕршыв вулать —*
*эс пĕлнĕ пул!*

*Вал вырăсла янрать пулсан, вара*
*Нарспи ятне илтмен çынсем сахал...*
*Ирех ларать чăвашам мунчара,*
*Туйне пуçлать-мĕн вата шур сухал...*

*Ханасемпе шавлать кив Шупашкар:*
*«Çут тĕнчере вайли çук этемрен!»*
*Панулмипе хĕрелнĕ çур пасар*
*Хана умне тухать чечекпелен.*

*Чăваш та çармăс, вырăспа тутар,*
*Удмурт та пушкарт... Венгрирен те*
*пур...*
*Ивник калать:*
*— Татах, Лекçей, куçар. —*
*Çурри чаваш та эс, çурри — удмурт.*

*Кайри ретре ларатап уявра.*
*Çут атапа эп. Çÿç хура, катра.*
*Ухсай пичче килет, пахать кара:*

*— Ут ман хыçран. Мĕскер ларан*
*кайра?..*

*Çар тумĕпеччĕ Уйап. Вал ыран*
*Каллех ак кайĕ чикĕ хĕррине.*
*Агаков тавранна тин варçăран,*
*Салтак тали чĕркенĕ урине...*

*Пĕлĕтсемпе хуралнă анăçран*
*Килетчĕ ĕнтĕ тар-етре шарши.*
*Чаваш поэзийĕ сас панаран*
*Хĕпĕртесе калаçрĕ пур Çĕршыв.*

*Калаçрĕ Жаров, Островой Сергей,*
*Калаçрĕç тусла халах ханисем...*
*Хана çуртне кĕрсен, вĕретчĕ чей,*
*Çуталиччен янратчĕç савасем.*

*Çав вăхатри çынсем чылайаш çук,*
*Таврăнаймарĕç çата варçăран.*
*Анчах вилмеççĕ. Сан пекех, Кĕçтук,*
*Çут тĕнчене вилмешкĕн çуралман.*

*Эс ĕмĕр-ĕмĕрех сыввисемпе*
*Утатан алла-аллан малалла.*
*Чĕресенче янаракан саввусемпе*
*Эс яланах умра çуталмалла!*

*Çулсеренех ешертĕр çуркунне,*
*Шавлатарах, кашлатар сĕм варман!*
*Таван чĕлхен хавачĕ пур чухне,*
*Поэтамар, эс пирĕнпе ялан!*